28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
АПРЕЛЬ
17
ЫТЛАРИКУН
73(6824) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

МТС-сен ӗҫне лайӑхлатассишӗн

Пирӗн Чӑваш республикинчи чылай МТС-сем хӑйсен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче те лайӑхтармарӗҫ. Вӗсенчен хӑшпӗрисем, ҫулран-ҫул ӳссе тӗреклексе пырса, пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. МТС-ӑн лайӑх ӗҫӗ, чи малтан, колхозсем вӑйлӑ тырпул туса илнинче палӑрса тӑрать. Акӑ, сӑмахран, Вӑрнар районӗ, иртнӗ ҫул тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн районсем хушшинчи пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура мала тухса, Оборонӑн Государственный Комитечӗн кусса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Ҫав ҫитӗнӳре, паллах, МТС-ӑн паха ӗҫне те курмалла. Ахальтен мар ӗнтӗ Вӑрнар МТС-не иртнӗ ҫулхи ӗҫсемшӗн СССР Наркомземӗ хӑйӗн кусса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата укҫан преми памалла турӗ. Ҫавӑн пекех Шӑхасан МТС-ӗн ӗҫне те лайӑх енӗпе палӑртмалла. Малтанхи ҫулсенче тӑтӑшах кая юлса пынӑ Ҫӗрпӳпе Куславкка МТС-ӗсем пӗлтӗр аван ӗҫлерӗҫ, хӑйсен районӗсене тырпул тухӑҫлӑхӗ тӗлӗшпе малтисен ретне тухма пулӑшрӗҫ. Чылай МТС-сем кӑҫалхи суракине тухма пӗтӗмӗшпех хатӗрленсе ҫитнӗ.

Анчах пирӗн республикӑра питӗ япӑх ӗҫлекен МТС-сем те пур-ха. Ку шута Улатӑр, Пӑрачкав, Сиява, Первомайски, Шӑмӑршӑ, Кувакино МТС-ӗсем кӗреҫҫӗ. Ҫав МТС-сем начар ӗҫленӗ пирки вӗсен районӗсем те ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче кая юлса пыраҫҫӗ, унти колхозсем ҫулсерен япӑх тырпул туса илеҫҫӗ.

СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ А. А. Андреев юлташ «1945 ҫулта МТС-сен ӗҫне лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен» приказ кӑларчӗ. Яланхи пекех, республикӑри малта пыракан МТС-сем, ҫав приказа илсен, ӑна ҫийӗнчех трактористсемпе комбайнерсем тата пӗтӗм МТС работникӗсем хушшинче сӳтсе-явса, хӑйсем валли тивӗҫлӗ выводсем турӗҫ. Сӑмахран, Красноармейски МТС-ра Нарком приказне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн тракторсене пурне те тепӗр хут тӗплӗн тӗрӗслесе тухнӑ та хӑйсем ӗҫлеме тивӗҫлӗ колхозсене ӑсатнӑ.

Нарком приказӗнче малта пыракан МТС-сен пуян опытне пӑхса тухнӑ, кая юлаканнисен ӗҫне тарӑн анализ тунӑ, кашни МТС-ӑн ӗҫне лайӑхлатмалли тӗплӗ те тӗрӗс майсем кӑтартса панӑ. Ҫав приказ МТС-сен ӗҫне тӗппипех лайӑхлатмалли анлӑ программа пулса тӑрать.

МТС-сен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсен тӗп сӑлтавӗсенчен пӗри вӑл ҫакӑ пулса тӑрать, — тесе кӑтартса парать Андреев юлташ: —«нумай машинно-тракторнӑй станцисен директорӗсемпе ытти работникӗсем МТС-сем йышӑнса тӑракан вырӑна тӗрӗс мар ӑнланаҫҫӗ, хӑйсен ӗҫӗ—тракторсемпе ҫемҫе суха тумалли плана тултарасси кӑна пулса тӑрать, тесе шутлаҫҫӗ, ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн япӑх кӗрешеҫҫӗ, хӑйсем ӗҫлесе паракан колхозсене организацилӗхпе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗреклетес ыйтусем ҫине ҫителексӗр ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ».

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ ялхуҫалӑхне аталантармалли 1945 ҫулхи план ҫинчен йышӑннӑ постановленире колхозсен, МТС-семпе совхозсен, ҫӗрӗҫ органӗсен, партипе совет организацийӗсен тӗп задачи—«тырпулсен тухӑҫлӑхне пур майсемпе те ӳстерсе пырасси тата пухса илекен тӗштырӑпа ытти ялхуҫалӑх продукчӗсен пӗтӗм хисепне ӳстересси пулса тӑрать», терӗҫ.

МТС-ӑн кашни работникӗ ҫакна асра тытса тӑма тивӗҫлӗ: машинно-тракторнӑй станци хӑйӗн ӗҫӗпе вӑйлӑ тырпул туса илес ӑнӑҫлӑха татса парать. МТС-ӑн тӗп тӗллевӗ — тырпул тухӑҫлӑхне ӳстересси пулса тӑрать. МТС ӗҫне хаклани чухне, чи малтан, вӑл ӗҫлекен колхозсем кашни гектартан мӗн чухлӗ тырӑ туса илнине пӑхас пулать. Нарком приказӗ ҫак енӗпе организациллӗ паха мероприятисем туса ирттерме кӑтартса парать. Малашне МТС-сен хӑйсен ҫулталӑкри отчӗтӗсемпе пӗрле колхозсемпе тунӑ договорсене мӗнле пурнӑҫа кӗртни ҫинчен калакан отчетсене те тӑратмалла. Ҫав отчетсенче трактор ӗҫӗсен планне тултарнине ҫеҫ мар, договорсемпе пӑхса хунӑ агротехникӑллӑ тӗп мероприятисене колхозсем тата МТС мӗнле пурнӑҫа кӗртнине те кӑтартмалла. Трактор бригадисене ҫулталӑклӑх заданисем панӑ чухне, тракторсен мӗн чухлӗ ӗҫ тумаллине кӑтартса панипе пӗрлех, кашни ӗҫе мӗнле срокенче тата агротехника тӗлӗшпе мӗнле пахалӑхлӑн туса ирттермеллине те палӑртмалла. Трактор бригади ӗҫлекен колхозра тырпул тухӑҫлӑхне мӗн чухлӗ ӳстермеллине кӑтартса задани памалла.

МТС-сем умне лартнӑ пысӑк та ответлӑ задачӑсене машинӑсемпе усӑ курас ӗҫе лайӑхлатассишӗн, машинӑсен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн малалла кӗрешсе пымасӑр пурнӑҫа кӗртме ҫук. Тракторсемпе тумалли ӗҫсен государство планӗ—кашни МТС-шӑн, кашни трактор бригадишӗн закон пулса тӑрать. Ӑна хисепӗ енчен те, пахалӑхӗ тӗлӗшпе те кирек мӗнле пулсан та пурнӑҫа кӗртмелле.

Трактор бригади—МТС производствинче тӗп звено пулса тӑрать. Пӗтӗм МТС ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ, колхозсенче вӑйлӑ тырпул туса илесси, тракторсене тухӑҫлӑн ӗҫлеттересси, пуринчен малтан, бригада мӗнле ӗҫленинчен килет. Нарком приказӗнче трактор бригадисене малалла тӗреклетес тӗлӗшпе паха майсем кӑтартса панӑ. Ҫав кӑтартусене МТС руководителӗсен ҫине тӑрсах пурнӑҫламалла.

Государство средствисене тата горючие перекетлесси — МТС работникӗсен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тӗп задачисенчен пӗри пулса тӑрать. Анчах перекетлӗхпе перекетлӗх хушшинче уйрӑмлӑх пур. Час-часах уйрӑм МТС-сенче трактористсем, горючи перекетлесе хӑварас тесе, ӑшӑх сухалама тытӑнаҫҫӗ, ӗҫӗн пахалӑхне чакараҫҫӗ. Паллах, кун пек перекетлӗх никама та кирлӗ мар. Вӑл колхозсене те, государствӑна та сиен кӑна кӳрет. МТС-семпе бригадӑсен нефть хуҫалӑхӗнче кӑтартуллӑ йӗрке тумалла, тракторсемпе вӗсен ҫумне кӑкарса ӗҫлемелли инвентаре ӗҫре тӗрӗс вырнаҫтарса тухмалла, тракторсене чарса тӑрса моторсене пушӑлла ӗҫлеттерессине тӗппех пӗтермелле, машинӑсене техника тӗлӗшӗнчен лайӑх пӑхса тӑмалла, —акӑ мӗнле перекетлемелле горючие!

Нумай МТС-сен хуҫалӑхӗсенче, картишӗсенче, мастерскойӗсенче, нефтебазӑсенче халиччен те кирлӗ пек йӗркелӗх тумен-ха. МТС картишӗсем ӑпар-тапӑрпа сӳп-ҫап тулса ларнӑ, машинӑсене ӑҫта килчӗ унта лартса усраҫҫӗ. Нарком приказӗнче МТС-сенчи хуҫасӑрлӑха пӗтермелли майсене уҫҫӑн кӑтартса панӑ. Кун та Ногинск районӗнчи колхозниксен пуҫарӑвне йышӑнса илни ӗҫе пысӑк пулӑшу пама пултарать.

Парти райкомӗсен МТС директорӗсемпе тата МТС-сенчи парторганизацисемпе пӗрле СССР Наркомземӗн Андреев юлташӑн приказне трактористсемпе комбайнерсене, МТС-сенчи мӗнпур работниксене тӗплӗн ӑнлантарса памалла. МТС-сен ӗҫне лайӑхлатмалли практикӑллӑ мероприятисем палӑртса хумалла, асӑннӑ приказа пурнӑҫа кӗртме пӗтӗм вӑя мобилизацилемелле.

МТС-сем колхозсемпе договорсем тунӑ тапхӑрта колхозниксен пухӑвӗсенче МТС-сен иртнӗ ҫулхи ӗҫӗсем ҫинчен отчетсем илтелемелле; Чӑваш АССР Наркомземӗн МТС-семпе колхозсем хушшинче 1945 ҫул валли договорсем туса ҫирӗплетес ӗҫе васкатмалла.

ВКП(б) Обкомӗ Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне республикӑра кӑтартуллӑ икӗ МТС тумашкӑн Вӑрнарпа Шӑхасан МТС-сӗсене уйӑрма хушнӑ. Ҫав МТС-сем чӗннипех кӑтартуллӑ хуҫалӑхсем пулчӑр тесен, вӗсенче кӑҫалах пысӑк ӗҫсем туса ирттерес пулать.

МТС-сен паха ӗҫӗ—вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тӑваттӑмӗш суракине ӑнӑҫлӑн ирттерессин, вӑйлӑ тырпул туса илессин никӗсӗ пулса тӑрать. Партипе правительство ялхуҫалӑхне аталантармалли 1945 ҫулхи план ҫинчен йышӑннӑ постановленире социализмлӑ ялхуҫалӑхне малалла ӳстерессишӗн кӗрешмелли анлӑ программа пачӗҫ. «МТС-сен тӗп задачи,—тенӗ ҫав постановленире,—машинӑсемпе тракторсен паркӗпе усӑ курассине малалла лайӑхлатасси, трактор ӗҫӗсен пахалӑхне ӳстересси тата колхозсем умӗнчи производствӑллӑ обязательствӑсене агротехника кӑтартса панӑ срокенче пурнӑҫа кӗртесси пулса тӑрать». СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗн А. А. Андреев юлташӑн приказӗ МТС-семпе ҫӗрӗҫ органӗсен мӗнпур работникӗсене ҫав тӗп задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртмелли татӑклӑ майсене кӑтартса парать.

Полтава облаҫӗнчи Лохвипа МТС-ӗн коллективӗ Совет Союзӗнчи мӗнпур машинно-тракторнӑй станцисен работникӗсене 1945 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва тухма чӗнсе каларӗ. Ҫав чӗнӗве йышӑнса илер, МТС-сен ӗҫне тӗпренех лайӑхлатассишӗн, колхозсен уйхирӗсенче тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн, ҫапла вара Тӑван ҫӗршывпа паттӑр Хӗрлӗ Ҫара татах та ытларах тырпул туса парассишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарар!

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 14-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 14-мӗшӗнче Земланд ҫурутравӗнче, КЕНИГСБЕРГРАН сурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре, БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла ҫапӑҫса туртса илнӗ, вӑл шутра—АЛЬКНИКЕН, РАНТАУ, НОЙКУРЕН, ЛОППЕНЕН, ЗАССАУ, БАТТАУ, ТИКРЕНЕН, САНКТ ЛОРЕНЦ, МОССИКЕН, КОТЦЛЯУКЕН, АУЕРХОФ, КОЙЕНЕН, ПОЕРШТИТЕН, КОСНЕНЕН, ЗЕЕРАППЕН, ШОРШЕНЕН, БЭРВАЛЬДЕ, ДОРОТЕНХОФ, ГРОСС ХАЙДЕКРУГ ятлӑ пысӑк ялсем тата НОЙКУРЕН, ЗЕЕРАППЕН чугун ҫул станцийӗсем. Апрелӗн 14-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем ку районра 7.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Чехословаки ҫӗрӗнче, ГОДОНИН хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, МАЗУР, КУЖЕЛОВ, МАЛАЯ ВРБКА, КНЕЖДУБ, СТРАЖНИЦЕ, ЛУЖИЦЕ, МИКУЛЬЧИЦЕ, МОРАВСКА НОВАЯ ВЕСЬ, ГРУШКИ, НОВЫЙ ЖИЖКОВ, СТАРЫЙ БРЖЕСЛАВ ялӗсене туртса илнӗ. ВЕНАРАН сурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре фронт ҫарӗсем Австри ҫӗрӗнче ХОХЕНАУ, ГРОСС ИНЦЕРСДОРФ, ОБЕР ЗУЛЬЦ, НЕКСИНГ, БАД-ПИРАВАРТ, КРОНБЕРГ, РИДЕНТАЛЬ, УЛЬРИХСКИРХЕН, ПРЕЗИНГ, ПУТЦИНГ, ЭНЦЕРАЛЬД ялӗсене туртса илнӗ.

ВЕНАРАН хӗвеланӑҫнерехре УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, ТРАЙЗЕН шывӗ урлӑ каҫнӑ та ГЕРЦЕГЕНБУРГ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—МИХЕЛЬХАУЗЕН, ПИШЕЛЬСДОРФ, ЦВЕНТЕНДОРФ, ПОНЗЕЕ, ТРАСДОРФ, ЗИТЦЕНБЕРГ, ГЕТЦЕРСДОРФ, ИНЦЕРДОРФ, КРЕЙЦ, ОССАРН, КАПЕЛЛЬН, ЕЙТЕНДОРФ, МУРШТЕТЕН, БОХАЙМКИРХЕН, ХРИСТОФЕН ятлӑ пысӑк ялсем тата МИХЕЛЬХАУЗЕН, ТРАСДОРФ, ГЕМЕЙНЛЕБАРН чугун ҫул станцийӗсем. Апрелӗн 13-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 2.200 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—107, бронетранспортерсем—19, хир тупписем—135, минометсем—44, пулеметсем—294, автомашинӑсем—615, паровозсем—69, чугун ҫул вагонӗсем—2.367, ҫар пурлӑхӗн склачӗсем—37.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Апрелӗн 13-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 70 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 40 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ХӖРЛӖ ЯЛАВЛӐ БАЛТИКА ФЛОЧӖН АВИАЦИЙӖ ТӐШМАН КАРАПӖСЕМПЕ ТРАНСПОРЧӖСЕНЕ ПЫРСА ҪАПНИ

Апрелӗн 12-мӗшӗпе 13-мӗшӗнче Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ тӑшманӑн Пиллау портӗнчи тата уҫӑ тинӗсри (Пиллауран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре) ҫар карапӗсемпе транспорчӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Бомбӑсемпе торпедӑсем пӑрахнипе пула, тӑшманӑн пӗр миноносецне, хурал та ҫӳрекен 9 карапне, 2 тральщикне, 10.000 тонна таякан танкерне тата пӗтӗмӗшпе 92.000 тонна таякан 10 транспортне шыва путарнӑ.

АПРЕЛӖН 15-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 15-мӗшӗнче Земланд ҫурутравӗнче, КЕНИГСБЕРГРАН сурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре, БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла ҫапӑҫса туртса илнӗ, вӑл шутра—РАУШЕН, ГЕОРГЕНСВАЛЬДЕ, ВАРНИКЕН, ГРОСС КУРЕН, КЛАЙН КУРЕН, БРЮСТЕРОР, ГРОСС ДИРШКАЙМ, КРАЙСЛЯКЕН, ГРОСС ХУБНИКЕН, КЛАЙН ХУБНИКЕН, ДОРБНИКЕН, КРАКСТЕПЕЛЛЕН, ПАЛМНИКЕН, ЗОЛГЕНАУ, ВИЛЛКАУ, ТИРЕНБЕРГ, МОРГАУ, КЛАЙН МЕДЕНАУ, МЕДЕНАУ, АДЛИХ, ПОВАЙЕН, ШУДИТТЕН, КОНДЕЕН, ВИДИТТЕН ятлӑ пысӑк ялсем. Апрелӗн 15-мӗшӗнче фронт ҫарӗсем ку районра 3.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем пулӑшнипе, ВЕНАРАН ҫурҫӗрелле чакма хӑтланнӑ нимӗҫ ҫарӗсен ушкӑнне аркатса тӑкнӑ та КОРНЕЙБУРГ хулипе ФЛОРИДСДОРФ хулине—нимӗҫсен ДУНАЙ шывӗн сулахай енчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—туртса илнӗ, ҫакӑн пекех тата ХАГЕНБРУНН, ВИЗАМБЕРГ, ЛАНГЕНЦЕРСДОРФ, ШТАММЕРСДОРФ, ЛЕОПОЛЬДАУ, КАГРАН, ШТАДЛАУ ялӗсене йышӑннӑ.

Ҫавӑн чухнехи ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем 3.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—32, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—49, хир тупписем—170, минометсем,—220, пулеметсем—215, автомашинӑсем—750, паровозсем—175, вагонсем—4.500, ҫар пурлӑхӗн склачӗсем—39.

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, апрелӗн 15-мӗшӗнче Австри ҫӗрӗнче САНКТ-ПЕЛЬТЕН хулине—ҫулсен паха узелне тата нимӗҫсен ТРАЙЗЕН шывӗ ҫинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата ПРЕЙВИЦ, ТРАЙСМАНЭР, ПОТТЕНБРУНН, РАСЦЕНДОРФ, ШТАТТЕРСДОРФ, АЛЬТМАНСДОРФ ялӗсене йышӑннӑ. Апрелӗн 14-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем 1.140 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусем пулман.

Апрелӗн 14-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 67 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 57 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Земланд ҫурутравӗнче, Кенигсберг хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ. Совет танкисчӗсемпе пехотинецӗсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та, ҫав тери хӑвӑрт малалла кайса, Санкт-Лоренц ялӗнчен хӗвеланӑҫнерехри вӑрман патне пырса тухнӑ. Нимӗҫсем ку районра хӑйсен артиллерине нумай пухса тӑратнӑ. Унсӑр пуҫне тата ҫыран тӑрӑх пыракан чугун ҫул ҫинче нимӗҫсен бронепоезчӗ ҫӳренӗ. Пирӗн ҫарсем, ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса, тӑшманӑн малтанах питӗ тӗплӗн хатӗрлесе хунӑ оборонине йӗркерен кӑларнӑ. Совет танкӗсем тӑшман бронепоездне аталанӑ та ӑна юрӑхсӑра кӑларнӑ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах нимӗҫсен артиллери позицийӗсене аркатса тӑкнӑ. Ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, пирӗн ҫарсем 15 километр малалла кайнӑ та Земланд ҫурутравӗн ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ пайне нимӗҫсенчен тасатнӑ. Халӗ Фриш-Гаф заливӗ хӗррипчи вӑрмансенче хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Пирӗн ҫарсем ку районра тӑшманӑн 12 контратакине сирсе янӑ, тимӗрпе бетонран тунӑ дотсене тата вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ опорнӑй пунктсене чылай туртса илнӗ. Нимӗҫсене Финшхаузен хулинчен 12 километрта ларакан Адлих Повайен ялӗнчен хӑваласа кӑларнӑ. Кун каҫиччен 5.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем трофейсем нумай тытса илнӗ, вӑл шутра—8 самолет, 137 хир туппи, 46 миномет, 490 пулемет, 10 паровоз, 105 чугун ҫул платформипе вагонӗ, ҫавӑн пекех тата боеприпаспа ҫар пурлӑхӗн 22 склачӗ.

* * *

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, Венӑран 10 километр ҫурҫӗртерехре ларакан Корнейбург хулине хӗвелтухӑҫ енчен вӗҫкӑнса кӗрсе кайнӑ. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах Украинӑри 3-мӗш фронт чӑсӗсем Дунай шывӗ урлӑ каҫнӑ та Корнейбург хулине кӑнтӑр енчен кӗрсе кайнӑ. Урамри ҫапӑҫусенче тӑшман гарнизонне йывӑр сухатусем кӳнӗ, вара нимӗҫсем пӗр йӗркесӗр каялла чакнӑ. Ҫапла вара, пирӗн ҫарсем Венӑран ҫурҫӗрелле чакма хӑтланнӑ нимӗҫ ҫарӗсен ушкӑнӗн каялла чакмалли пур ҫулӗсене те татнӑ. Совет чӑсӗсем ҫаврӑнса илнӗ тӑшмана пур енчен те атакӑлама тытӑннӑ. Нимӗҫсем хаяррӑн хирӗҫ тӑнӑ, анчах та совет ҫарӗсем хӗснине чӑтса тӑрайман. Пирӗн пехотинецсемпе танкистсем, артиллери пулӑшнипе, малтан тӑшмана темиҫе пая пайласа янӑ, унтан вара, кӑнтӑрла иртсен, хупӑрласа илнӗ нимӗҫ ҫарӗсен ушкӑнне аркатса тӑкнӑ. Кунти ҫапӑҫусенче нимӗҫсен Дунай шывӗн сулахай хӗрринчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗ пулса тӑракан пысӑк промышленноҫлӑ Флоридсдорф хулине туртса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен темиҫе пин вилли выртса юлнӑ.

Пӗр тӗреклетнӗ пункт патне пымалли вырӑнӗсенче нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. 23 совет артиллерисчӗ, Тимошенко старши лейтенант командир пулса ертсе пынипе, виҫӗ автомашина ҫине ларнӑ та вӗсен хыҫне кӑларнӑ тупӑсемпе пӗрле тӑшман тӑракан вырӑна вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Хӑюллӑ боецсем тӑшмана автоматсемпе тата винтовкӑсемпе пӑтӗнченех пеме пуҫланӑ. Ҫав автомашинӑсен шоферӗсем машинӑсене ҫаврӑрса тӑратсанах артиллеристсем пӗр самантра тупӑсем патне тӑнӑ. Тупӑ наводчикӗ кӗҫӗн сержант Жилкин тата красноармеецсем Веселковпа Гордичук тупӑпа пеме пуҫланӑ та тӑшман пулемечӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Контратака пуҫласа янӑ нимӗҫ пехоти пирӗн тупӑсем патне ҫывхарсах ҫитнӗ. Совет артиллерисчӗсем гитлеровецсемпе алӑ вӗҫҫӗн ҫапӑҫма пуҫланӑ та тӑшманӑн контратакине сирсе янӑ. Тӑшмана хыҫран хӑваласа пырса, пирӗн боецсем 20 нимӗҫе тыткӑна илнӗ.

* * *

Венӑран хӗвеланӑҫнерехре Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла куҫса пырса, анлӑ фронтпа Трайзен шывӗ ҫине тухнӑ. Нимӗҫсен ушкӑнӗсене нумайӗшне шыв хӗррине хӗстерсе лартнӑ та пӗтерсе тӑкнӑ. Совет ҫарӗсем, каялла чакакан тӑшмана таптаса пырса, Санкт-Пельтен хулинчен ҫурҫӗртерехре тата кӑнтӑртарахра Трайзен шывӗ урлӑ каҫнӑ та нимӗҫсен оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗ пулса тӑракан Санкт-Пельтен хулине штурмласа туртса илнӗ. Ку хула ҫулйӗрсен пысӑк узелӗ пулса тӑрать. Ун патне пилӗк чугун ҫул тата темиҫе шоссе ҫулӗ пырса тухаҫҫӗ. Хулара машинӑсем тӑвакан, металл ӗҫлекен тата ытти заводсем те пур. Пирӗн ҫарсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан тӑшман йывӑр сухатусем тӳсет.

* * *

Балтика тинӗсӗнче пирӗн карапсем нимӗҫсен 7.000 тонна таякан транспортне шыва путарнӑ.

СССР-па Югослави суту-илӳ килӗшӗвӗ тунӑ

1945 ҫулхи апрелӗн 13-мӗшӗнче Мускавра Совет Союзӗпе Югослави правительствисем пӗр-пӗрне таварсем тӑратасси ҫинчен килӗшӳ туса алӑ пуснӑ.

Ҫав килӗшӳ тӑрӑх, Совет Союзӗ Югославие вӑрҫӑ валли тата гражданла халӑха кирлӗ таварсем тӑратмалла, Югослави Совет Союзне—вӑрҫӑпа халӑх хуҫалӑхӗ валли кирлӗ таварсем тӑратмалла.

Килӗшӳ ҫине ҫаксем алӑ пуснӑ: Совет Правительстви хушнипе—Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссарӗ А. И. Микоян, Югослави Правительстви хушнипе—Суту-илӳпе Снабжени Министрӗ Петрович господин. (ТАСС).

Югослави Министрӗсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал Мускаври М. В. Ломоносов ячӗпе тӑракан университетра пулни

Апрелӗн 14-мӗшӗнче Югослави Министрӗсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал Мускаври М. В. Ломоносов ячӗпе тӑракан государство университетӗнче пулнӑ. Маршалпа пӗрле ҫаксем пулнӑ: СССР Оборона Халӑх Комиссариачӗн Тулашри ҫыхӑну Отделӗн Начальникӗ М. П. Кутузов генерал-майор, СССР Наркоминделӗн Протокол Отделӗн Заведующийӗ Ф. Ф. Молочков, РСФСР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ Новиков юлташ тата ыттисем те.

Броз-Тито Маршала Мускаври государство университечӗн ректорӗ И. С. Галкин профессор йышӑннӑ. Калаҫӑва РСФСР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ Новиков юлташ, геологипе тӑпра факультечӗн профессорӗ Вилиенский юлташ хутшӑннӑ. Броз-Тито Маршал университетӑн организациллӗ структурипе тата вӗренӳпе тӗпчев ӗҫӗсемпе интересленнӗ.

Белградпа Мускав университечӗсем хушшинчи ҫыхӑнӑва тата творчествӑллӑ пӗрлешӗве ҫирӗплетме кирлине палӑртнӑ.

Мускаври государство университечӗн студенчӗсемпе преподавателӗсем И. Броз-Тито Маршала ӑшшӑн кӗтсе илнӗ.

(ТАСС).

УКРАИНӐРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙӖН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧӖ ҪУМӖНЧИ ПАРТИ РАБОТНИКӖСЕМПЕ ПРОПАГАНДИСТСЕН ШКУЛӖ

Киев хулинче Украинӑри коммунистсен партийӗн Центральный Комитечӗ ҫумӗнче парти, совет тата комсомол работникӗсен ҫулталӑк хушши вӗренмелли шкулӗ тата Украинӑри коммунистсен партийӗн горкомӗсемпе обкомӗсем валли пропагандистсемпе лекторсем тата хаҫат работникӗсем хатӗрлемелли ҫулталӑк хушши вӗрентмелли шкул уҫӑлнӑ. (ТАСС).

ИККӖМӖШ ВОЕННӐЙ ЗАЕМӐН ОБЛИГАЦИЙӖСЕНЕ АЛЛА ПАМАЛЛИ СРОК

Иккӗмӗш Военнӑй Заемӑн облигацийӗсене алла памалли срок апрелӗн 30-мӗшӗнче иртет. Ҫырӑнса илнӗ ҫӗрте (предприятире, учреждениире, колхозра) алла илеймен ҫынсем вӗсене перекет кассисенче илме пултараҫҫӗ. Облигацисене вӗсен хуҫисене аллах тыттараҫҫӗ е почтӑпа ярса параҫҫӗ.

Иккӗмӗш Военнӑй Заемӑн виҫӗ выլявӗ пулса иртнӗ ӗнтӗ. Тӑваттӑмӗш выляв 1945 ҫулхи июлӗн 5-мӗшӗнче пулать. (ТАСС).

Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсене каясси ҫинчен

Совет Правительстви Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Президентӗнчен Трумэн господинран тата государство секретарӗнчен Стеттиниус господинран ятарласа ҫыру илнӗ, унта вӗсем СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарне В. М. Молотова Вашингтона пыма тата Пӗрлешнӗ Нацисен Сан-Франциско хулинчи конференцийӗн ӗҫӗсене хутшӑнса ӗҫлеме чӗннӗ. Килес кунсенче СССР Верховный Совечӗн сессийӗ уҫӑлнӑ пирки В. М Молотов Мускавра пулманни йывӑрлӑхсем кӑларса тӑратать пулин те, Совет Правительстви, ҫӳлте каланине шута илсе, малта асӑннӑ чӗнӗве йышӑннӑ.

В. М. Молотов Вашингтонра Президент патӗнче пулать тата Сан-Франциско хулинчи конференцире Совет делегацине ертсе пырать.

СУРАКИ УМӖН

Ҫурхи ӗҫсем пуҫланнӑ

Шӑхасан районӗнчи чылай колхозсем клевер акма тытӑннӑ. «Березовка» колхоз 20 гектар, «Красный Октябрь» колхоз 50 гектар клевер акнӑ. «Березовка» колхоз—районри чи пысӑк колхозсенчен пӗри. Суракинче акмалли ҫӗр лаптӑкӗ унӑн 616 гектар шутланать. Суракине кӗске вӑхӑтра ирттерес шутпа кунта ӗне-вӑкӑрсемпе те усӑ курма шутлаҫҫӗ. 25 вӑкӑра тата 7 ӗнене кӳлсе ҫӳреме вӗрентнӗ. Тӑрӑнри «Красный партизан» колхоз членӗсем пӗр кун хушшинче 41 гектар кӗрхи тырӑсене кӗлпе тата тислӗк шӗвекӗпе апат панӑ. Куйбышев ячӗпе тӑракан колхоз 5 гектар кӗрхи тулла, 18 гектар ыраш калчисене кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗпе апатлантарнӑ.

Кӗрхи калчасене пӑсӑласран сыхлаҫҫӗ

Калинино районӗнчи Уелапари «Броневик» колхоз членӗсем, Чӑваш республикинчи ялхуҫалӑх работникӗсен канашлӑвӗ чӗнсе каланине сӳтсе-явса, конкретлӑ обязательствӑсем илчӗҫ. Вӑл обязательствӑсен тӗллевӗ—кашни гектартан вӑтам шутпа 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ туса илесси.

Колхозниксем халӗ ҫуркуннехи ӗҫсене пуҫӑнчӗҫ. Апрелӗн 10-мӗшӗ тӗлне 2.5 гектар клевер акнӑ. Айлӑм вырӑнсенче юр хулӑм, ҫавӑнпа калча ҫӗрме пултарать. Калчасем патне сывлӑш пытӑр тесе, кунта 25 гектар ҫинче шӑтӑксем чавса, юра уҫса тухнӑ. Ҫак ӗҫре кулленех 50—60 колхозник ӗҫленӗ.

П. СОРОКИН.

Ӑмӑртӑва хутшӑнса

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. (Хамӑр корр.). Районри колхозсенче Чӑваш республикинчи ялхуҫалӑх работникӗсен канашлӑвӗ чӗнсе каланине сӳтсе-яваҫҫӗ. «Мотор» колхоз членӗсем Чӑваш республики 25 ҫул тултарнине социализмлӑ ҫӗрӗсӗнче ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илес тесе татӑклӑ обязательствӑсем илчӗҫ.

Колхозниксем суракине тӗплӗн хатӗрленеҫҫӗ. Суракине хатӗрленесси пӗлтӗрхинчен чылай лайӑх пулса пырать. Колхоз хире 3.850 лав тислӗк кӑларса, плана пӗтӗмпех пурнӑҫланӑ. 65 центнер кӗл тата вырӑнти ытти удобренисем чылай пухнӑ. 450 гектар ҫине юр тытса хӑварнӑ. Кунпа пӗрлех ҫурхи шыва тытса юлма хатӗрленеҫҫӗ.

Вӑрлӑхсем ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Сӳресемпе плугсем, ытти инвентарьсем ытлашшипех пур. 9 вӑкӑра кӳлсе ӗҫлеме вӗрентрӗҫ.

Яков СИГАЙ.

Тӗрӗслӳ мӗн кӑтартрӗ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Ҫак кунсенче Кудемерти «Коммунизм» колхоз суракине мӗнле хатӗрленсе ҫитнине тӗрӗслерӗҫ. Тӗрӗслӳ комиссинче «Коммунизм» колхозпа ӑмӑртакан колхозсен представителӗсем те пулчӗҫ.

Колхозӑн вӑрлӑх ҫителӗклӗ, вӗсене районри лабораторинче тӗрӗсленӗ. Кашни вӑрлӑх ҫине лаборатори тӗрӗсленин результачӗсене ҫырса хунӑ. Ялхуҫалӑх машинисем юсавлӑ. Ут таврашӗсем тата урапасем ҫителӗклӗ. Суракинче 21 лашапа тата 6 вӑкӑрпа ӗҫлеме пӑхнӑ. Вӗсене пурне те уйрӑм ҫынсем ҫумне ҫирӗплетнӗ, вӑйлӑ апат ҫине тӑратнӑ. Сураки вӑхӑтӗнче лашасене ҫитерме ҫителӗклӗ апат уйӑрса хунӑ.

Сураки вӑхӑтӗнче пӗрлешӳллӗ столовӑй тата ачасен ясли пулать. Продуктсем пур. Ҫуртсене те хатӗрленӗ. Колхозниксем вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн пикенсе кӗрешеҫҫӗ. Хӗллехи вӑхӑтра кӑна хире 982 лав тислӗк кӑларнӑ. 50 центнер кӗл, 35 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ. Вӗсене типӗ ҫӗрте тытаҫҫӗ.

Тӗрӗслӳ комиссийӗ уйрӑм ҫитменлӗхсем те тупрӗ. Хӑшпӗр плугсене начар юсанӑ. Ҫавӑнпа та вӗсене халех ҫӗнӗрен юсама хушса хӑварчӗ. Колхозра 2 сеялка пур, вӗсене тасатман тата кирлӗ пек хатӗрлесе лартман.

А. РУМЯНОВА.

Кӳршӗри колхоза пулӑшма

Первомайски районри Йӳҫ Шӑхаленчи «КИМ» колхоз Литвинов ячӗпе тӑракан колхоза суракинче акса хӑварма 55 пӑт вӑрлӑх парса пулӑшать. Колхоз членӗсем те хӑйсен запасӗнчен вӑрлӑхлӑх ҫӗрулми параҫҫӗ. А. Фролов—2 пӑт, Г. Морозов пӗр пӑт, фермӑсен заведующийӗ Петров юлташ 6 пӑт, Е. Васильевпа А. Скворцов колхозниксем кашниех 4-шар пӑт ҫӗрулми панӑ.

Ҫавӑн пекех «Красноармеец» колхоз членӗсем те хӑйсен колхозне валли вӑрлӑхлӑх ҫӗрулми параҫҫӗ. С. Пешков, Т. Широкова, А. Ильметов, В. Давыдов, В. Марлынов, Л. Марлынов юлташсем кашниех 2-шер пӑт, И. Никитин 10 пӑт вӑрлӑхлӑх ҫӗрулми панӑ. Ку ӗҫе комсомолецсем пуҫарса янӑ. Вӗсем пӗр кун хушшинче 60 пӑт ытла ҫӗрулми пухнӑ.

В. ТИМОФЕЕВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

МТС-ри парторганизаци çураки умĕн

Шăхасан МТС-ĕ Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче трактор ĕçĕсен планне çулсеренех тултарса пырать. Çакă вăл партин култи пуçламĕш организацийĕ МТС дирекцине ĕçре тивĕçлипе пулăшса пынинчен нумай килет. Парторганизаци (секретарĕ Мишуткин юлташ) партиллĕ-организациллĕ ĕçе производствăри ĕçпе таччăн çыхăнтарса пырать.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа парторганизаци МТС-ра ĕçлекен 23 çынна партие илнĕ. Парти ретне производствăра чыслăн та кăтартуллăн ĕçлесе пыракан юлташсем кĕреççĕ. Нумаях пулмасть партие 3-мĕш трактор бригадин бригадирне Я. Михайлов юлташа илнĕ. Вăл ертсе пыракан бригада тракторсемпе ялхуçалăх машинисене иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнчех юсаса çитернĕ. Трактор ĕçĕсен 1944 çулхи планне 117 процент тултарнă, 600 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Михайлов юлташ кăçалхи çуракинче татах та лайăхрах ĕçлеме ĕмĕтленет. Бригадăри трактористсем хушшинче социализмлă ăмăрту договорĕсене тунă.

Çавăн пекех кăçал 9-мĕш трактор бригадин бригадирне Чернов юлташа парти членне илнĕ. Чернов юлташ трактористсем умĕнче пысăк хисепре тăрать. Вăл Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçласа пырать. Ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ ăна «Отличник социалистического сельского хозяйства» значокпа наградăланă. Чернов юлташ трактор ĕçĕсен иртнĕ çулхи планне 158 процент тултарнă, 1500 килограмм горючи перекетлесе хăварнă, тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисене иртнĕ çулхи декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлнех юсаса çитернĕ. Вăл парти организацийĕ хушнă ĕçсене чыслăн пурнăçласа пырать, хăй ертсе пыракан бригадăра агитатор пулса ĕçлет. Трактористсене Отечественнăй вăрçă фронтĕнчи хыпарсемпе, республикăри малта пыракан трактористсен паха опычĕпе паллаштарать.

Шăхасан МТС-ĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци коммунистсемпе комсомолецсем тата мĕнпур работниксем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелессишĕн кĕрешет. Кунта парти шкулĕ ĕçлет. Парти шкулне коммунистсемпе комсомолецсем активлăн çÿреççĕ, занятисене лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Çавăн пекех кунта техминимум кружокĕ те организациленĕ. Унта та коммунистсемпе комсомолецсем юратса çÿреççĕ.

Парти организацийĕ кашни коммунистах общественнăй ĕçе явăçтарма тăрăшать. Коммунистсем парторганизаци хушнă ĕçсене çине тăрса пурнăçласа пыраççĕ. Сăмахран Илларионов коммуниста общежитире пурăнакан трактористсем хушшинче агитатор пулса ĕçлеме хушнă. Вăл çак ĕçе аван йĕркеленĕ. Вăл трактористсен пушă вăхăтне пĕрре те сая ямасть, вĕсем патне Совинформбюро хыпарĕсене, партипе правительствăн решенийĕсене вăхăтра çитерсе тăрать.

Парторганизаципе МТС дирекцийĕ çумĕнче «За рулем» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Стена хаçачĕ малта пыракан трактористсен паха опытне сарать, ĕçе юратма вĕрентет, ĕçре чăрмантарса пыракансене питлет. Çавăн пекех кунта Хисеп хăми те пур. Унта лайăх ĕçлекен трактористсен ячĕсене курма пулать. Кăтартуллăн ĕçлекен трактор бригадине пама куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав тунă.

Парторганизаци комсомолăн МТС-ри пуçламĕш организацине ĕçре куллен пулăшса пырать. Çав пулăшу хăйĕн паха результатне парать. Комсомол организацийĕ хăйĕн лайăх ĕçĕшĕн ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Малта пыракан 9 комсомолеца Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе тата СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн «Отличник социалистического сельского хозяйства» значокĕпе наградăланă.

Партин МТС-ри пуçламĕш организацийĕ, хăйĕн кулленхи ĕçĕнче пуçарулăх кăтартса, тăтăшах çĕнĕ ыйтусем сÿтсе-явать, тивĕçлĕ решенисем йышăнать. Нумаях пулмасть кунта Чăваш республики 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленес ыйтăва сÿтсе-явнă. МТС дирекцийĕ юбилей тĕлне çĕнĕ клуб, ремонт тумалли мастерской, тимĕрçĕ лаççи, горючи хумалли сарай тума йышăннине ырласа, уйрăм коммунистсене ответлă ĕçсем хушса хăварнă. Халĕ çав ĕçсене Долгов, Сергеев, Тимофеев, Петров коммунистсем ертсе пыраççĕ. Вĕсем, юсав ĕçĕ пĕтнĕ хыççăнах, вăрмана, строительство валли йывăç касса хатĕрленĕ çĕре, тухса каяççĕ. Паянхи куна 200 кубометр ытла йывăç касса турттарнă та ĕнтĕ. Ку ĕçре Тимофеев, Серов, Моисеев коммунистсем пысăк вăй хурса ĕçленине палăртмалла. Вĕсем унта çураки пуçланиччен ĕçлеме шутлаççĕ.

Парти организацийĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçне çирĕп планпа туса пырать. Плана вăхăтра пурнăçлассишĕн кашни коммунистах тăрăшать.

Парторганизацин паха ĕçĕ МТС-а çĕнĕрен-çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшать. МТС тракторсемпе машинăсене кăçалхи çураки валли хатĕрлес ĕçе иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнчех туса çитернĕ. Халĕ парторганизаци умĕнче питĕ ответлă та чыслă задача—çуракине вăхăтра та пысăк пахалăхлăн туса ирттересси тăрать. Çакна Шăхасан МТС-ĕнчи кашни коммунистах тарăннăн ăнланса ĕçлет.

В. ДАВЫДОВ,
ВКП(б) Обкомĕн инструкторĕ.

СЫХĂНУ ĔÇĔНЧИ ПЫСĂК ÇИТМЕНЛĔХСЕМ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри почта уйрăмĕсемпе почта агенчĕсем чылайĕшĕ хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пымаççĕ. Ял Совет исполкомĕсем те вĕсене кирлĕ таран пулăшса тăмаççĕ. Акă, Именкассинчи почта агентствин заведующийĕ Гурий Мефодьев, почта çурчĕ сивĕ тесе, час-часах почтăра пулмасть. Упири почта çуртне питех те культурăсăр тытаççĕ. Ĕçпе пыракан çынсене ларма пукансем те çук. Районри сыхăну кантурĕ те почта уйрăмĕсенчен уйрăлсах тăмасть. Çыхăну çуртне юсамалла. Стенасем тусан айне пулнă. Сыпăçтарнă шпалерсем хăпăна-хăпăна аннă та усăнса тăраççĕ. Пыракан çынсене ларма тенкел-пукансем те çук.

Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем письмоносец пулма унта ĕçлеме пултарайман çамрăк ачасене уйăраççĕ. Çавна пула тĕрлĕ йĕркесĕрлĕхсем пулаççĕ. Мăн Шетмĕ почта уйрăмĕнчи письмоносец Петрова юлташ, нумаях пулмасть, икĕ çын патне янă укçана пĕр çыннах парса хăварнă. Чатукасси почта уйрăмĕнче ĕçлекенсем район центрне ямалли çырусене Канаша янă, районри çыхăну кантурĕнче ĕçлекенсем Упи почта уйрăмне ямалли çырусене Чатукасси почта уйрăмне ярса панă. Çапла вара çав çырусем «адресата тупаймасăр» ик-виçĕ эрне çÿренĕ. Почта работникĕсем конверт çине çырнă адреса вуласа пăхма «ерçеймеççĕ» пулас.

Районри çыхăну уйрăмĕнче кадрсем çитмеççĕ. Телеграфистка, хаçат-журнал сарас енĕпе ĕçлекен организатор тата ытти те çук. Ку вăл районри çыхăну кантурĕ кадрсем хатĕрлес енĕпе çителĕксĕр ĕçленине пĕлтерет. Паллах, кадрсем хатĕрлесси çăмăл ĕç мар, анчах та çав йывăрлăхран тухма пулать. Çине тăрса ĕçлени кирлĕ.

Почтăра çырусене уçса пăхас йăла пулмалла мар. Апла пулин те, районри çыхăну кантурĕнче ĕçлекенсем çакна пăхăнмаççĕ. Нумаях пулмасть, çакăн пек ĕç пулса иртнĕ: фронтовик арăмĕ Ф. хăйĕн упăшки патне çыру çырнă. Çав çырăва уçнă та, урăх тĕрлĕ чернилпа кирлĕ мар сăмахсем хушса хунă. Фронтовик çав çырăва каялла ярса панă. С. П. ятлă çын хăй килĕштернĕ юлташĕ патне уçă çыру янă пулнă. Почтăра ĕçлекенсенчен пĕри çыру çине урăх сăмахсем хушса хунă. Анчах почта кантурне кĕрсе ларнă çав хулигансене ответ тыттарас тесе тăрăшакансем çук-ха.

Çыхăну ĕçĕнче тата ытти йĕркесĕрлĕхсемпе çитменлĕхсем те пур. Шетмĕри письмоносец Петрова фронтовик çемьисем патне районри социальнăй обеспечени отделĕ куçарса панă укçасене хăй илсе алă пусса хунă. Кун пирки те ниçта та, никам та мерăсем йышăнман.

Мăн Шетмĕри почта уйрăмĕн начальникĕ Петрова «ун пирки эпĕ мар, письмоносец Петрова айăплă», тенипех лăпланасшăн. Чатукассинчи почта уйрăмĕн начальникĕ пулнă Куракова фронтовиксен çемьисем патне куçарнă укçана 25 пин тенкĕ хăйĕн кăсйине чикнĕ, анчах преступникрен халĕ те укçине шыраса илмен.

Красноармейски районри çыхăну кантурĕнче государство дисциплинине çирĕплетмелле.

С. ШАДИН.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Артель ĕçĕ юсанса пырать

СĔНТЕР. Пушкăртри «Тĕрлекен» промысла артель февраль уйăхĕнчи производство планне 145 процент тултарчĕ. Артель коллективĕ çак çитĕнÿве социализмлă ăмăртăва лайăх организацилесе турĕ. Артельте комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем çиччĕ. Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухнă. Ăмăртура И. Самушков, Е. Шачкова, А. Вашурова бригадисем малта пыраççĕ. Вĕсен бригадисем уйăхри заданисене 120 процентран пуçласа 190 процент таран пурнăçларĕç. Бригада членĕсен ĕç тухăçлăхĕ пысăк. М. Алексеева работница нормăна 2 хут ирттерсе тултарать.

Аластаççен ĕç дисциплини те çирĕп. Иртнĕ уйăхра ĕç дисциплинине пăсни пĕрре те пулман.

Артель коллективĕ Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Ăмăртăва хутшăнса, уяв умĕнхи уйăхсенчи ĕç планĕсене ытлашшипех тултарма пулчĕ.

КАЗАНЦЕВ,
Артель правленийĕн председателĕ.

Трумэн сенат членĕсемпе тĕл пулни

ВАШИНГТОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 13-мĕшĕнче Трумэн президент сенаторсемпе пĕрле ирхи апат тунă. Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, апатланура пулнă сенаторсем кайран çапла каланă: Трумэн Рузвельтăн тулашри политикине çаплипех тытса пыма пулни çинчен пĕлтерчĕ, тенĕ.

Трумэн шухăшĕпе, Рузвельт вилни Америкăн тулашри политикин тĕп принципĕсене улăштармасть.

Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн председателĕ Коннэли çапла каланă: Трумэн ертсе пыни «Рузвельтăн тулашри политикине малалла аталантарĕ. Аслă Рузвельт аллинчен тухса ÿкнĕ ялава хăйĕн аллине илсе, вăл çав ялава пирĕн аслă тĕллевсене пурнăçлас çулпа илсе кайĕ», тенĕ.

СТЕТТИНИУС ПИЧЕТ ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕНЕ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президентпа паян икĕ хут калаçнă хыççăн Стеттиниус пичет представителĕсене официальнăй йĕркепе çапла каланă:

«Хальхи вăрçа çĕнтерÿллĕн вĕçлес тата хăрушсăрлă мир тăвас паха задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре эпир Трумэн президента пур енчен те пулăшса тăма пурте хатĕр пулни çинчен каласа, эпĕ мĕнпур американецсен шухăшне палăртатăп, тесе шутлатăп. Трумэн президент ертсе пынипе, эпир—правительство та, халăх та—Рузвельт пурнăçлама тăрăшнă задачăсене пурнăçлас ĕçре иккĕленсе тăмăпăр. Пĕрлешнĕ нацисен Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцие срокра хатĕрленсе çитеççĕ. Малтан палăртса хунă пекех, конференци апрелĕн 25-мĕшĕнче уçăлать. Трумэн президент мана çапла калама ирĕк пачĕ: Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительствин тулашри политикин тĕллевĕнче те, çав политикăна вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре те нимĕнле улшăну та пулмĕ. Пĕрлешнĕ ытти нацисемпе пĕрле эпир малалла, çĕнтерÿ патнелле кайăпăр (çапла тунипе эпир Германипе Япони урăх нихăçан та агрессиллĕ ĕçсем тума ан пултарччăр тесе тăрăшатпăр) тата нумай ăрусем валли мир тытса тăма, пур çынсем валли те кирлĕ пек хăрушсăрлăх туса хума пултаракан пĕтĕм тĕнчери вăйлă организаци туса хурăпăр».

Америкăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене гитлеровецсем хаяррăн тыткалаççĕ

СТЕТТИНИУСПА СТИМСОН ПĔРЛЕ ПĔЛТЕРНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Государство секретарĕ Стеттиниус тата çар министрĕ Стимсон пичет представителĕсене пĕрле каласа панинче Америкăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене Германире хаяррăн тыткаланине хытă критикленĕ. Вĕсем каланă тăрăх, Германи юриех тискер пулнипе пĕтĕм тĕнче тарăхать. Стеттиниуспа Стимсон çапла каланă: Америка çыннисем тĕлĕшпе нимĕçсем тискер ĕçсем тунине Пĕрлешÿллĕ Штатсенче манас çук, çав тискер преступленисемшĕн айăплисене суд умне тăратĕç.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Целле хулине илнĕ хыççăн 48 километр малалла кайнă, халĕ вĕсем тăшманпа Юльцен хули патĕнче çапăçаççĕ. Союзниксен çарĕсем Тангермюнде хули патĕнче Эльба шывĕ çине тухнă та тăшманпа çав хулара çапăçма тытăннă. Союзниксен çарĕсем Эльба шывĕ урлă икĕ тĕлте каçса кайнă. Союзниксен Эльба шывĕн хĕвелтухăç енне куçса кайнă чаçĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă. Союзниксен наступлени туса пыракан чаçĕсене нимĕçсем тупăсемпе переççĕ.

Гарц вăрманĕнче союзниксен бронетанковăй чаçĕсем 48 километра яхăн малалла кайнă, Дессау хулинчен 5 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан яла çитсе кĕнĕ. Бронетанковăй отрядсем хыççăн наступлени туса пыракан пехота чаçĕсем Галле хулинчен 5 километр çурçĕртерехре тата 6 километр çурă кăнтăртарахра выртакан районсене çитнĕ. Пейн хулине тăшмантан тасатнă хыççăн союзниксен бронетанковăй чаçĕсем çав хуларан 26 километр хĕвелтухăçнелле малалла кайнă.

Союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Мульде шывĕ урлă каçнă та Хемниц хулинчен хĕвеланăçнерехре ларакан Мейнсдорф хулипе Хоэнштейн хули тулашĕсене çитнĕ.

Гейльбронн хули районĕнче союзниксен çарĕсем çав хуларан 13 километр хĕвелтухăçнелле тата 10 километр кăнтăралла Штуттгард хули еннелле куçнă.

Рейн çывăхĕнче, Баден хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнелле союзниксен çарĕсем 16 километр ытла малалла кайнă.

Рур «михĕ» районĕнче Дортмунд хулине тăшмантан тасатнă.

Апрелĕн 13-мĕшĕнче союзниксем 57.187 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Италире 8-мĕш армин чаçĕсем, тăшман вăйлăрах хирĕç тăма пуçланине пăхмасăрах пĕтĕм фронт тăршшĕпе наступлени туса пыраççĕ. 8-мĕш арми чаçĕсем Имола хули хĕррине çитнĕ, вĕсем Бастия хули патне çитесси 2 миля юлнă. Хĕвеланăç çыранĕнче американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем малалла куçса пыраççĕ.

США посольствинче Франклин Д. Рузвельт президента хисеплесе туса ирттернĕ хуйхăллă церемони

Апрелĕн 14-мĕшĕнче Мускавра Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен посольствинче Франклин Делано Рузвельт президента хисеплесе хуйхăллă церемони пулса иртнĕ.

Церемонире çаксем пулнă: Пĕрлешÿллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи послĕ В. Гарриман господин ертсе пыракан Америка посольствин сотрудникĕсем, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Тулашри суту-илÿ Халăх Комиссарĕ А. И. Микоян, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕсем А. Я. Вышинский, С. А. Лозовский, С. И. Кавтарадзе, И. М. Майский, Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ арми генералĕ А. И. Антонов, А. Д. Крутиков, ют çĕршывсен послĕсем, посланникĕсем, ĕçри поверенннăйĕсем, СССР Наркоминделĕн, Оборона Халăх Комиссариачĕн тата Тинĕс çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн ответлă сотрудникĕсем. (ТАСС).

—о—

РУЗВЕЛЬТА ПЫТАРНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). Рузвельт ÿчĕ выртакан Шурă Çуртăн виçĕ стени тăрăх 10 фут çÿллĕш чечек çыххисем выртаççĕ. Шурă Çурт чечексем яма чарăнма ыйтнă пулин те, уйрăм çынсемпе организацисем çаплах чечек çыххисем яраççĕ.

Рузвельт тупăкне, США ялавĕпе витсе, ахаль постамент çинех лартнă. США-н хĕçпăшаллă вăйĕсен тăватă представителĕ тупăк патĕнче хисеплĕ хуралта тăраççĕ. Тупăк хыçĕнче—кафедра, вăл кафедра умĕнче тĕн службине туса ирттермелле. Вилнĕ президентпа сывпуллашма темиçе пин çын Шурă Çурт патне пухăнаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президент ертсе пынипе США-н паллă деятелĕсем 200 çын ытла ĕнер Рузвельта хисеплесе туса ирттернĕ тĕн службинче пулнă. Ăна Вашингтон епископĕ Дан Шурă Çуртра туса ирттернĕ. Панихидăра çаксем пулнă: Иден, Громыко, Галифакс, герцог Атлонский, кабинет членĕсем нумайĕшĕ, Нью-Йорк штачĕн губернаторĕ Дьюи, демократиллĕ партин нациллĕ комитечĕн председателĕ пулса ĕçленĕ Флинн, Маршалл генерал, Сэммер Уэллес тата дипломати корпусĕн йышлă представителĕсем.

Панихида пуçланиччен президент ÿтне Шурă Çурта ăсатма Вашингтон урамĕсенче 400.000 çынна яхăн пухăннă.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Гринвич вăхăчĕпе 03 сехет те 00 минутра Рузвельт ÿтне илсе пыракан поезд Вашингтонран Гайд-Парка (Нью-Йорк штачĕ) тухса кайнă. Апрелĕн 15-мĕшĕнче ирхине Рузвельта çавăнта пытармалла.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). ТАСС корреспонденчĕ Гайд-Паркран пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт ÿтне илсе пыракан поезд унта Гринвич вăхăчĕпе 12 сехет те 40 минутра çитнĕ. Вашингтонран тухнă поезд çинче Трумэн президент, Америка правительствин членĕсем, верховнăй суд членĕсем, Рузвельт тусĕсем пулнă. Канадăн премьер-министрĕ Кинг та Рузвельта пытарма пынă.

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Гайд-Паркран пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельта хăйсен йăхĕн именийĕнчи садра пытарнă. Пытарнă вăхăтра Рузвельт çемьин членĕсем, официальнăй çынсен пысăк делегацийĕ тата çар представителĕсем пулнă.

Вилнĕ президент тупăкĕ çине уйрăм çынсемпе обществăллă организацисенчен, вăл шутран Эйзенхауэртан, чечексем нумай хунă.

Гаити, Куба тата Доминикан республикисен генеральнăй консулĕсем çав республикăсенчен илсе пынă виçĕ пĕчĕк ешĕк тăпрана президент тупăкĕ çине парахнă.

Тупăка шăтăка антарас умĕн 75 миллиметрлă тупăсемпе çирĕм пĕр хут пĕр харăс пенĕ. Вăл тупăсене библиотека умне лартса тухнă. Рузвельт вăл библиотекăна халăха парнеленĕ пирки вăл ĕнтĕ халăхăн чи хаклă япали пулса тăнă.

ИДЕН США-на ПЫНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден ĕнер США-на Рузвельта пытарма самолетпа вĕçсе пынă.

—о—

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ФОН ПАПЕНА ТЫТНА

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, американецсен парашют çарĕсем Рурта пытанса пурăнакан фон Папена тытнă.

Тĕнчери лару-тăру

Çак кунсенче паттăр Хĕрлĕ Çар, фашистла нимĕç захватчикĕсене аркатса пырса, çĕнĕ чаплă çĕнтерÿсем турĕ.

Хĕвелтухăç Пруссин крепоçĕне центрĕ пулса тăракан Кенигсберг хули парăнчĕ. Гитлеровецсем хăйсем çав хулана хĕвелтухăçнелле тапăнса кĕмелли трамплин тесе шутланă. Хĕрлĕ Çар Австри столицине — Вена хулине ирĕке кăларчĕ. Вена —Европăри чи пысăк хуласенчен пĕри, вăйлă промышленность центрĕ пулса тăрать.

Кенигсберг парăннипе пула, нимĕçсем хăйсен Балтика тинĕсĕ çинчи оборонин стратегиллĕ паха узелне çухатрĕç. Кунта фашистсен чи пысăк йăвине çапса аркатнă. Совет чаçĕсен çав çитĕнĕвне палăртса, Лондонри радио çакна кăтартса парать: Пруссин военщинин тĕрекĕ тата Прусси чĕри пулса тăракан Кенигсберг хули авалтанпах, Берлин шурлăхсем варринче ларакан пысăк мар ял кăна пулнă чухнех, Прусси столици пулнă. Нимĕç историкĕсем çапла çырнă: «Германи пуласлăхĕшĕн Балтика тăрăхнелле выртакан кашни пусăм çĕр Альпа леш енчи кирек мĕнле королевствăран та пахарах пулса тăрать», тенĕ. Кенигсбергшăн пынă çапăçусенче нимĕçсен 92.000 çын ытла тыткăна парăннă, 42.000 çынна çити вилсе пĕтнĕ тата çав тери нумай çар техники пĕтнĕ.

Нимĕç çарĕсене Хĕвелтухăç Пруссире çапса аркатассине вĕçлесе пырса, Хĕрлĕ Çар, фашистла Германие пĕтĕмĕшпех аркатса тăкас ĕçе хăвăртлатас шутпа, тăшмана татах та хăвăтлăрах пыра-пыра çапма хатĕрленет.

Хĕрлĕ Çар Европăн вăтаçĕрĕнче Австрире туса пыракан операцисем вăрçăн политика тата стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Венăра Австри промышленноçĕн тĕп предприятийĕсем вырнаçнă. Австрие 1938 çулхи март уйăхĕнче гитлеровецсем оккупациленчен Венăра 2 миллион çынна яхăн—пĕтĕм çĕршыври халăхăн виçĕ пайĕнчен пĕр пайне яхăн пурăннă. Вена урлă Чехословакие тата Балкана каякан чугун çулсем каçаççĕ. Мюнхен—Инсбурк—Верона хушшинчи тĕп çулйĕр Австрие Италипе çыхăнтарать тата фашистсен йăвипе—Мюнхен хулинелле каять (çав хулан пивпойĕсенче гитлерла парти çуралнă). Австрире тимĕр руди, тăхлан, пăхăр, çĕркăмрăкĕ кăлараççĕ. Унăн территорийĕ 40 процента яхăн вăрмансемпе витĕннĕ. Кунта металлурги промышленноçĕ, автомобильсем тăвакан, пир-авăр тĕртекен промышленноçпа ытти тĕрлĕ промышленность вăйлă саралнă, боеприпассемпе хĕçпăшал туса кăларакан заводсем ĕçлеççĕ. Венăран инçех мар нефть тухакан вырăнсем пур. «Герман Геринг» ятлă вăрă-хурахла концерн Австрин пĕтĕм промышленноçне хăй аллине тытса илнĕ. Гитлеровецсем кунта Рейнпа Вестфали районĕнчен çар промышленноçĕн чи паха предприятийĕсене куçарнă.

Фашистла пуç касакансем, Кăнтăр Европăри тусем хушшинче хăйсем валли юлашки хÿтлĕх шыраса, Австри çĕрне хăйсен аллинче нумайччен тытса тăма ĕмĕтленнĕ. Венгрие ирĕке кăларнă Хĕрлĕ Çар, Австри çĕрĕ çине пырса кĕрсе, гитлеровецсен çав ĕмĕчĕсене ÿпĕнтерсе хучĕ. Çакăнпа пĕрлех совет çарĕсем нимĕç çарĕсен Югославирен чакса тухмалли çулйĕрĕсене хăратса тăраççĕ, çав çулсен пĕр пайне татнă та ĕнтĕ.

Хĕрлĕ Çар Австри çĕрĕ çине пырса кĕнĕ май, Совет правительстви çапла каларĕ: Совет правительстви «Австри территорийĕн мĕнле те пулин пайне тытса илес е Австрин социальнăй стройне улăштарас тĕллеве лартмасть», терĕ, вăл çак çĕршывра фашистла нимĕç оккупанчĕсен режимне пĕтерме тата демократиллĕ йĕркесем туса хума пулăшасси çинчен каларĕ. Совет правительстви калани Австри халăхне çав тери савăнтарчĕ. Ирĕке кăларнă районсенчи халăх Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене, хăйне ирĕке кăларакансем вырăнне хурса, кĕтсе илет тата Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшса тăрать. Австри патриочĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç унччен те кĕрешнĕ, захватчиксен мероприятийĕсене хирĕç саботаж тунă, çар завочĕсенче тата чугун çул транспорчĕ çинче диверсиллĕ ĕçсем туса пынă. Гитлеровецсем Австри халăхне нимĕç çарĕсен тылне хăваласа кайма хăтланнине хирĕç те Австри патриочĕсем хăюллăн кĕрешеççĕ.

Хĕрлĕ Çар Австри халăхне ирĕклĕх кÿрет. Фашистсем Австрире пуç пулса тăрассин шăпи тулчĕ.

Совет çарĕсем çавăн пекех Югослави халăхĕсене те хăйсен çĕрне гитлеровецсенчен ирĕке кăларассишĕн пыракан кĕрешÿре пулăшаççĕ. Совет Союзĕпе Югослави хушшинче туслăх, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договора алă пусни ылханлă тăшмана пуçĕпех çапса аркатас куна çывхартать, Югославипе Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхне татах та ытларах çирĕплетет.

Хĕрлĕ Çар пирĕнпе туслă Чехословаки çĕрне те нимĕç захватчикĕсенчен тасатсах пырать.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче гитлеровецсем хăйсен тĕп вăйĕсене пухса тăратнă та Хĕрлĕ Çара хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем хăйсен хĕвеланăçĕнчи фронтне пушатса хăварнă. Пирĕн союзниксем хăйсен çулĕ çинче тăшман нимĕçле хирĕç тăнине те тĕл пулмасăр, халĕ нимĕç çĕрне, шалалла, пĕр чăрмавсăр тенĕ пекех, куçса пыраççĕ.

Англипе Америка хаçачĕсен корреспонденчĕсем, хĕвеланăç фронтĕнчи лару-тăру çинчен çырса, çапла пĕлтереççĕ: союзниксен малалла куçакан çарĕсене хирĕç «кам аллине те пулин тыткăна парăнма май шыракан нимĕçсем кăна» пыраççĕ. Лондонри радио çапла пĕлтерет: союзниксен 3.000 танкĕ ытла, хăйсене хирĕç тăнине тĕл пулмасăр, Германи вăтаçĕрнелле кĕрсе пыраççĕ. Ганновер хулине тытса илнĕ хыççăн, союзниксен çарĕсем Гамбург тата Мегдебург хулисем еннелле анлă фронтпа куçма тытăннă, вĕсем Берлин умĕнчи юлашки чăрмав пулса тăракан Эльба шывĕ çине тухнă та ĕнтĕ. 9-мĕш армин 2-мĕш бронетанковăй дивизийĕ çав шыв урлă та каçни çинчен калакан хыпарсем пур. Американецсен 3-мĕш армийĕн чаçĕсем, Тюрингири Гота хулине тытса илнĕскерсем, малалла куçса пырса, Эрфурт хулине çавăрса илнĕ. Уйрăм вырăнсенче вĕсем Чехословаки чиккинчен 80 километртра кăна тăраççĕ. Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: американецсен 15-мĕш армийĕ те «Берлин еннелле ăмăртса чупакан çарсемпе пĕрлешнĕ».

Лондонри «Таймс» хаçат çакна тĕрĕс палăртать: нимĕç çарĕсем малтанхи пекех йĕркеллĕ çарсем пулса çапăçакан хĕвелтухăçĕнчи лару-тăру хĕвеланăçĕнчи лару-тăруран тĕлĕнмелле уйăрăлса тăрать.

Фашистла Германин лару-тăрăвĕ пачах та шанчăксăррине пăхмасăрах, Гитлерăн Трансоцеан агентстви: хĕвеланăçĕнче юлашки çапăçу пулман-ха, Германи çарĕсене кунта çапса аркатман-ха, тесе çирĕплетме хăтланать. Çав агентство каланă тăрăх вара, ку фронтра нимĕç çарĕсене план тăрăх ертсе пыраççĕ, пулать. Çакна ăнланса илме йывăр мар: çавăн пек халапсене гитлеровецсем хăйсен халăхĕ валли кăна мар хатĕрлеççĕ. Гитлеровецсем юлашки минутсенче те хăйсене пуçĕпех çапса аркатассинчен çăлăнса юлма ĕмĕтленеççĕ. Гитлеровецсен çав ĕмĕтне хăйсем кăна мар хавхалантарса тăраççĕ, вĕсене хăйсен Германи тулашĕнчи адвокачĕсем те пулăшаççĕ. Çемçе чĕреллĕрех пулма, вăрçă пĕтнĕ хыççăнах нимĕçсемпе туслă çыхăну пуçласа яма чĕнекен уйрăм сасăсем илтĕне-илтĕне каяççĕ.

Анчах гитлеровецсен çав ĕмĕчĕсем те, ытти мĕнпур ĕмĕчĕсем пекех, путланса лараççĕ. Демократиллĕ аслă державăсен халăхĕсем Германи милитаризмĕпе нацизмне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма хатĕр тăраççĕ. Вĕсем, Германи пĕтĕм тĕнчери мире урăх нихăçан та пăсма ан пултартăр тесе, мĕн кирлине пурне те пурнăçа кĕртеççĕ.

* * *

Гитлеровецсем, хăйсен фашистла партине çăлса хăварас тесе, унăн тĕп кадрĕсене вăрттăн ĕçлемелле туса, аяккарах пытарса хăварас тесе, ют çĕршывсенче хăйсен агенчĕсене йышлăн сарас, хăйсен капиталĕсене сыхласа хăварас тесе, халĕ çине тăрсах ĕçлеççĕ. Вĕсем союзниксене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе яма ĕмĕтленеççĕ, çапла вара, Геббельс нумаях пулмасть каланă пек, «пурне те çĕнĕрен пуçласа яма» шутлаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ çакна çирĕп асра тытас пулать: нимĕç захватчикĕсене çĕнтерес кун мĕн чухлĕ çывăхарах, ирĕклĕхе юратакан халăхсен сыхлăхĕ те çавăн чухлĕ пысăкрах пулмалла. Тăшмана татах та вăйлăнрах пыра-пыра çапсан кăна, çав тери сыхăлăхлă пулсан кăна, гитлерла Германие пĕтĕмпех çапса аркатма, фашистсен йăвисене çĕр çăмăрĕн кирек мĕнле кĕтесĕнче те шыраса тупса пĕтерсе тăкма пулать.

И. ЛОТОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—37, заместителĕн — 2—39, секретарĕн — 1—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 1—23.

НТ 00313 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж .6.000